Тăвай районĕн хаçачĕ

# ЯЛ ĔÇЧЕНĔ

*1935 çулхи февралĕн 17-мĕшĕнче тухма пуçланă*

2025 çул

Юпа (октябрь), 17

ЭРНЕКУН

41/10781/№

*Хакĕ ирĕклĕ*

## ПРЕСС-ЦЕНТР

**Хĕвелçаврăнăшне вăрăлăх пухса кĕртесси вĕçленсе пырать. Валентин Грачев ăна октябрĕн 16-мĕшĕ тĕлне 696 гектартан 646-шне пухса кĕртнĕ, пурĕ 1744 тонна е кашни гектартан 27 центнер çапса илнĕ. Ĕнер хĕвелçаврăнăш уйĕнче пилĕк комбайн ĕçленĕ.**

**Алексей Макаров хресчен-фермер хуçалăхĕ ку ĕçе вĕçленĕ, 200 гектар çинчен 340 тонна е кашни гектартан 17 центнер хĕвелçаврăнăш пухса кĕртнĕ.**

**Пухса илнĕ техникăлла культурăсен лаптăкĕ ĕнерхи кун тĕлне пĕтĕмпе 1044 гектарпа (95,4 процентпа) танлашнă. Ку шута рапс та кĕрет.**

**«Кубнинский» агрофирма (Киччĕ ялĕ) 25 гектар çинчен вăрлăхлăх кукуруза çапса илнĕ. Пĕтĕмпе çак ĕçе 43 гектар çинче пурнăçламалла.**

**7607 гектар çинче кĕрхи çĕртме сухи тунă, ку вăл иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен нумайрах.**

**Выльăх-чĕрлĕхе ăнăçлă хĕл каçарма тăрăшса, округра кашни условнăй выльăх пуçне 28 центнер ытла апат единици хатĕрлесе хунă.**

## «Тӳрĕ лини» иртет

**Регион Пуçлăхĕ Олег Николаев хăйĕн телеграм-каналĕнче пĕл-тернĕ тăрăх, октябрĕн 21-мĕшĕнче 12 сехетре хăйне Чăваш республикин Пуçлăхĕн должноçне тепĕр хут суйланă хыççăн пĕрремĕш хут «тӳрĕ лини» ирттерет.**



«Ку пирĕн пĕрлехи диалог, регион аталанăвĕ мĕнле пулса пынине сӳтсе явăпăр, çитес вăхăтри тĕп задачăсене палăртăпăр. Сире кашнине илтни тата татăклă хурав пама май пурри маншăн пысăк пĕлтерĕшлĕ. Сирĕн шухăшăр пире чăннипех те хăш енĕпе ĕçлессине палăртма пулăшать»,– пĕлтернĕ вăл хăйĕн телеграм-каналĕнче.

Регион ертӳçи палăртнă тăрăх, унран кирек епле ыйтăва та ыйтма юрать. Ыйтусене патшалăх услугисен порталĕ урлă е «Контактра» социаллă сетьри «Чăваш Республики» ушкăнра маларах çырма юрать. «Тӳрĕ лини» кунĕнче трансляци чатне çырма е 8(8352) 565-100 номерпе шăнкăравлама майсем пулаççĕ.

«Тӳрĕ линие» Олег Николаевăн телеграм-каналĕнче, «Контактра» социаллă сетьри «Чăваш Республики» ушкăнра, çавăн пекех «Россия 24» телеканал эфирĕнче, «Радио России» радиостанци хумĕсем çинче трансляцилеççĕ.

## РЕСПУБЛИКĂРА, ОКРУГРА

- Чăваш Енĕн агропромышленноç комплексĕ республика экономикине пысăк тӳпе хывать, регионăн пĕтĕмĕшле продукчĕн 14,6 процентне тивĕçтерет. Республика акакан 1 гектар лаптăкран, Раççейрипе танлаштарсан, 1,5 хут ытларах продукци туса илет. Çавна май экспорта ăсатакан ял хуçалăх продукцийĕн калăпăшĕ те ӳссех пырать. 2030 çул тĕлне АПК продукцийĕн экспортне 2021 çулхипе танлаштарсан 1,5 хутран кая мар ӳстерме палăртнă.
- Чăваш Енре кăçалхи январь-август уйăхĕсенче ял хуçалăх тытăмĕнче хăй тĕллĕн ĕçлекен 582 çынна 85,5 миллион тенкĕлĕх патшалăх пулăшăвĕ парса пулăшнă. Ку шута пирĕн округ çыннисем те кĕреççĕ. Укçана ĕне, сурăх-качака, ял хуçалăх техникипе оборудованийĕ (хакĕн 40 процентне саплаштараççĕ), хурт-хăмăр ĕрчетме кирлĕ материалсем (40 процент), минерал удобренийĕ (30 процент) туянма, тăпрана агрохими тĕлĕшĕнчен тата вăрлăха лабораторире тĕрĕслеме (тăкаксен 50 процентне) параççĕ.
- «Раççей – аталану майĕсен çĕршывĕ» платформăра ял хуçалăх тытăмĕнчи ертӳçĕсем валли «Агропромышленноç комплексĕн лидерĕсем» конкурс пуçланнă. Унăн тĕп тĕллевĕ тĕрлĕ тытăмри – аграри наукинчен пуçласа вĕрентӳ, бизнес тата патшалăх управленийĕ таранччен – хăй çине яваплăх илме тата çынсене ертсе кайма пултаракан маттур ертӳçĕсене тупса палăртасси тата пулăшасси. Конкурса хутшăнма кăмăл тăвакансенчен заявкăсене ноябрĕн 9-мĕшĕччен йышăнаççĕ.
- Ял-хула территорийĕсене, урамсемпе çурт-йĕр таврашне «симĕслентермелли» смотр-конкурс итогĕсене пĕтĕмлетнĕ. Кăçал чи лайăххисене хавхалантармалли укçа виçине пĕтĕмпе 736 пин тенкĕ таран пысăклатнă. Хальхинче конкурсра социаллă учреждениесем хушшинче Йĕпреçри психоневрологи интерначĕ мала тухнă. «Чечек лаптăкĕсем тата кану вырăнĕсем» номинацире Шупашкарти 10-мĕш ача сачĕ çĕнтернĕ. Чи симĕс урам – Патăрьел округĕнчи Нăрваш Шăхальти Уй урамĕ. Уйрăм çынсен çурчĕсенчен Вăрмар поселокĕнчи Егоровсен çуртне чи лайăххи тесе палăртнă.
- Пичет çуртĕнче кире пуканĕ йăтассипе «Хыпар» хаçат парнисене çĕнсе илессишĕн Пĕтĕм Раççейри турнирăн йĕркелӳ комитечĕн ларăвĕ иртнĕ. Ăна «Хыпар» издательство çурчĕн ертӳçи Виктория Вышинская ертсе пынă, ларура ăмăртупа çыхăннă тĕп ыйтусене пăхса тухнă. Пĕтĕм Раççейри турнир октябрĕн 24–26-мĕшĕсенче Шупашкарти маунтинбайк центрĕнче иртĕ. Кире спорчĕпе туслисем РФ спорт мастерĕн нормативне пурнăçлассишĕн тупăшĕç.
- Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав, «Хисеп Палли» орденсен кавалерĕ тата медальсемпе ЧАССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕн Хисеп грамотине виçĕ хутчен тивĕçнĕ, ВЛКСМ тата КПСС Тăвай райкомĕсенче яваплă должноçсенче, 1965–1979 çулсенче Тăвай райĕçтăвкомĕн председателĕнче, 1979–1986 çулсенче районти халăх контроль комитечĕн председателĕнче ĕçленĕ Василий Архипович Козлов (Тăвай районĕ, Чутей ялĕ, 1925–2001) çуралнăранпа октябрĕн 15-мĕшĕнче 100 çул çитрĕ.

**Иван ГЛАДКОВ хатĕрленĕ**

## ИНФОРМАЦИ КУНĔ

# Кун йĕркинче – паянхи темăсем

**Юнкун Тăвай тăрăхĕнче Пĕрлехи информаци кунĕ иртнĕ. Унта Чăваш Республикин патшалăх ветеринари службин ертӳçин тивĕçĕсене вăхăтлăхпа пурнăçлакан Евгений Корнилов, Тăвай муниципалитет округĕн администрацийĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Вероника Николаева, округри депутатсен Пухăвĕн депутачĕсем, территори пайĕсен начальникĕсем тата ыттисем хутшăннă.**

Евгений Корнилов Пĕрлехи информкунра сӳтсе явакан темăсемпе республика шайĕнчи информацисене çутатса панă. Пĕрремĕш темăпа пăхнă 2025 çулхи вырма итогĕсемпе администрацин ял хуçалăхĕпе экологи пайĕн тĕп специалист-эксперчĕ Альбина Федорова паллаштарнă. Вăл округ ĕçченĕсем вырмана ăнăçлă вĕçленине, пĕтĕмпе 35 пин тонна ытла е кашни гектар пуçне 34 центнер тырă туса илнине, кĕрхи ытти ĕççене те вăхăтра туса ирттерме тăрăшнине палăртнă. Округри инфраструктура объекчĕсене кĕрхи-хĕллехи тапхăра епле хатĕрлени çинчен администрацин строительство, çул-йĕрпе ЖКХ пайĕн начальникĕ Александр Петров каласа панă. Хутса ăшăтмалли сезона çулталăк тăршшĕпех тикĕссĕн хатĕрленнине пĕлтернĕ вăл, котельнăйсемпе ăшă сечĕсенче тивĕçлĕ юсав ĕçĕсем туса ирттернĕ. Ведомствăсем хушшинчи комисси те тĕрĕсленĕ хутса ăшăтмалли сезона епле хатĕрленнине. Телее, ку таранччен çитменлĕхсем палăрман. Округ администрацийĕ паспорт та илнĕ ку тапхăра хатĕр пулнине çирĕплетсе. Вероника Николаева округ территорийĕнчи шыв объекчĕсене мăшкăлтăк шывĕпе вараланине мониторинг туманнине, ун пек проблема çуккине пĕлтернĕ. Округра шывсене варалама пултаракан пысăк промышленноç предприятийĕсем çук, ыттисем ун пек начар витĕм кӳреймеççĕ.

«Культура хутлăхĕ» проекта пурнăçлассипе мĕнле ĕçленипе администрацин культура, социаллă аталану тата архив ĕçĕн пай начальникĕ Оксана Кириллова чарăнса тăнă. Унпа республикăра 2024 çулхи октябрĕн 2-мĕшĕнченпе ĕçлеççĕ. Проектпа килĕшӳллĕн 127 мероприяти ирттернĕ, вĕсене 26 пин ытла çын хутшăннă. Билетсен 90 процентне яхăн Пушкин карттипе сутнă. Пирĕн округра 6 мероприяти иртнĕ пĕлтĕр, вĕсене 760 çын явăçнă, кăçалхи 5 уйăхра вара 3 мероприяти йĕркеленĕ, 305 çын хутшăннă. Проекта пурнăçласси малалла пырать. Октябрĕн 22-мĕшĕнчеТăвайри культура çуртĕнче Чăваш патшалăх юрăпа ташă академи ансамблĕ «Музыка кино» оркестр программин премьерине кăтартĕ.

Информкун картинче Тăвайри вăтам шкулта та тĕлпулу иртнĕ.

Граждансене харпăр хăй ыйтăвĕпе йышăнассине те йĕркеленĕ.

**ХАМĂР ИНФ.**

# Грантпа хавхалантараççĕ

**Кăçал Чăваш Енри ял хуçалăх тытăмĕнче вăй хуракан 17 çынна «Перспектива» грантпа хавхалантарма йышăннă. Çакă çырла, пахча çимĕç туса илес ĕçе вăйлатмашкăн, агротуризма аталантармашкăн май парĕ. Грант виçи 147,9 миллион тенкĕпе танлашать.**

Конкурс пĕтĕмлетĕвĕ тăрăх çичĕ фермерпа ял хуçалăх организацине çырла çитĕнтермешкĕн 60 миллион тенкĕ панă. Уçă лапамра пахча çимĕç туса илес тĕллевлисем валли 57,9 миллион тенкĕ уйăрнă. Ку укçана улттăн тивĕçнĕ. 10 миллион тенкĕлĕх пĕр грант агротуризма аталантармашкăн пулăшĕ.

Агротуризм валли пăхса хăварнă укçан юлнă пайне çырла, пахча çимĕç туса илекенсене памашкăн тĕллев тытнă. Çавна май 20 миллион тенке тепĕр 3 фермер хуçалăхĕ илет.

Сăмах майăн каласан, пирĕн округри çырла туса илекен Владислав Витальевич Кузьмин фермер та (Улянкă ялĕ) 2024 çулта «Перспектива» гранта тивĕçнĕ. Вăл укçапа (5 миллион тенкĕпе) отрасле малалла аталантарма усă курнă.

**Иван ГЛАДКОВ**

# Тепĕр икĕ çемье тивĕçнĕ

**Тăвай округĕнче тепĕр икĕ çамрăк çемьене çурт-йĕр сертификачĕсем панă.**

Кăçал вара çакăн пек патшалăх пулăшăвне пилĕк çемье тивĕçнĕ. Çĕнĕ хваттере куçакансене округ администрацийĕн представителĕсем чун-чĕререн саламланă. Çĕнĕ çуртра яланах ăшăлăх, хăтлăх тата ача-пăча кулли, савăнăç хуçалантăр, тенĕ. Çак пысăк пулăшу «РФ гражданĕсене юрăхлă та хăтлă çурт-йĕрпе тата коммуналлă пулăшусемпе тивĕçтересси» патшалăх программипе килĕшӳллĕн пурнăçа кĕрет. Шăпах çакăн пек пуçарусем çемьесене малашлăха шанма, ачасене воспитани пама хăтлă условисем йĕркелеме пулăшаççĕ.

**Светлана ВАНЕРКЕ**



**2026 ÇУЛХИ ПĔРРЕМĔШ ÇУР ÇУЛШĂН ÇЫРĂНАР!**

**Хисеплĕ вулакансем!**

**«Ял ĕçченĕ» хаçата 2026 çулхи пĕрремĕш çур çулшăн çырăнтарасси малалла пырать.**
**Ăна почта çыхăну уйрăмĕсенчен çырăнса илмелли хак – 715 тенкĕ те 86 пус. .**
**Альтернативлă йĕркепе хаçата ултă уйăхлăха редакцие килсе тата кооператорсен магазинĕсем урлă çырăнмалли хак – 420 тенкĕ.**

# Ял аталанăвне хĕрарăмсен ыră витĕмĕ

**Эрне пуçламăшĕнче Чăваш Енре ял хĕрарăмĕсене халаллана «Усă диалог» ятпа тĕлпулусен ярăмĕ Тăвай округĕнчен пуçланнă. Ăна Пĕтĕм тĕнчери ял хĕрарăмĕсен кунне халалланă, Чăваш Енри Хĕрарăмсен Союзĕпе Ял хуçалăх министерствин «Вăйсене пĕрлештерсе: вырăнти хăй тытăмлăх тата ялта ăнăçлă ĕçлекен хĕрарăмсем» проекчĕпе килĕшӳллĕн йĕркеленĕ.**

Ял хастарĕсене Тăвай муниципалитет округĕн пуçлăхĕ Олег Ломоносов, ЧР Хĕрарăмсен пĕрлĕхĕн председателĕ Наталья Николаева, хĕрарăмсен вырăнти уйрăмĕн председателĕ Татьяна Иванова, округри ашшĕсен канашĕн ертӳçи Николай Перцев саламланă.

Чăваш Енри хĕрарăмсен юхăмĕн историйĕпе паллаштаракан ролик общество пурнăçне вĕсем пысăк тӳпе хывнине, 1927 çулта хĕрарăмсен канашĕн пĕрремĕш председателĕ Ольга Талля пулнине, 2020 çултанпа ăна Наталья Николаева ертсе пынине аса илтерчĕ. Чăваш Енре предпринимательлĕх ĕçĕнче паян 15 пин хĕрарăм тăрăшать, ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳçисенчен кашни виççĕмĕшĕ – хĕрарăм, Раççейре кашни 5-мĕш агростартапа вĕсен вăйĕпе усрă.

– Çак тĕлпулу пирĕн Тăвай округне аталантармашкăн чăнкăн хавхалану тата идейăсен çăлкуçĕ пулса тăрĕ. Мероприятие пирĕн пултаруллă та пуçаруллă хĕрарăмсем пухăнчĕç, вĕсем Тăвай тăрăхĕн экономикипе социаллă пурнăçне пысăк тӳпе хываççĕ,– терĕ Олег Анатольевич.

Усă калаçу вăхăтĕнче малтисен опычĕпе паллашнă май, шкул саккинченех ял валли кадрсем хатĕрлессине пырса тивекен, вырăнта харпăр хăй ĕçне пуçаракансене пулăшас тата ытти çивĕч ыйтусене те сӳтсе явнă. Наталья Алексеевна кăçалхи юпа-чӳк уйăхĕсенче пурнăçа кĕртме палăртнă пĕрлехи проектпа паллаштарчĕ. Ăнăçлă ĕçлекен хĕрарăм-предпринимательсем, харпăр хăй ĕçне йĕркелесе, фермер хуçалăхĕсен ертӳçисен ĕçĕсенче е ытти тытăмра пултарулăхĕпе палăрнă хĕрарăмсем хутшăннипе шкулсенче усă диалогсем, класс сехечĕсем ирттерме палăртнине пĕлтерчĕ.

Тăвай муниципалитет округĕн ертӳçи те, калаçăва хутшăннă ăнăçлă ĕçлекен хĕрарăмсем те Чăваш Енри




хĕрарăмсен пĕрлĕхĕн пуçарăвне ырланине палăртрĕç.

«Кубнинский» сыр цехĕн ертӳçи Татьяна Николаевна Юркина фермерсен шкулĕнче вĕренсе сыр тăвас ăсталăха вĕреннĕ. Патшалăх грантĕ ăна Чутейре цех уçма пысăк пулăшу кӳнине асăнчĕ.

Паян 20 сортлă сыр, йогурт, ытти продукци кăлараççĕ пĕрлешӳллĕ хуçалăхăн сĕт-юр варĕнчен. Шкулта вĕренекенсене çак професси алла илме ăсталăх класĕсем йĕркелеççĕ кунта. Канаш, Шупашкар хулисенчи, юнашар округри вĕренӳ учрежденийĕсенчи ачасем çак ĕçпе интересленнине, хăйсем те продукци кăларас процеса хутшăнса пăхнине пĕлтерчĕ сыр ăсти. Çакна видеоролик урлă кăтартрĕ.

Наталья Алексеевнăна та кăсăклантарчĕ ăнăçлă аталанса пыракан предпринимателĕн ĕçĕ-хĕлĕ. Самантпа усă курса, вăл та Татьяна Николаевнăна ача амăшĕ пулнă ятпа саламларĕ.

Анжела Юрьевна Илларионова «Анжелăран чечексем» чечек лавккин хуçи. Хоббирен аталанакан бизнеса суйлани пирки хавхаланса каласа пачĕ. Халиччен те шкул ачисемпе тĕл пулнă, хăйĕн ĕçĕпе кăсăклантарса, чечек çыххисем хатĕрлес енĕпе ăсталăх занятийĕсем йĕркеленĕ.

Эльза Валерьевна Степанова – декораципе прикладной искусство ăсти. Мускаври ВДНХ куравĕнче кăтартнă ал ĕçĕсене. Кил валли илемлĕ эрешсем тăвать. Садик ачисемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕпе, Тăвай тата ытти шкулсенчи вĕренекенсемпе темиçе те тĕл пулнă. Пултарулăх тĕсĕсене çĕнетсех пырать. Туй капăрлăхĕсем ăсталать, хальхи вăхăтра чăваш эрешсене алла илет.

«Сирĕн тĕслĕхĕрсем ачасене çуралнă кĕтесрех хăйсен телейне тупма, наставник юхăмне аталантарма, ыră витĕмĕр ялта ĕçлеме кадрсем хатĕрлеме пулăшмалла»,– палăртрĕ Наталья Николаева.

Округ пуçлăхĕ Олег Анатольевич пуçарăва ырласа, тĕлпулăва хутшăннă округри тĕрлĕ ĕç тытăмĕнчи ăнăçлă тăрăшакан хĕрарăмсене вĕренӳ учрежденийĕсенче пулса çамрăксене ялта аталанма, пурăнма мĕнле майсем пурри çинчен каласа кăтартма сĕнчĕ.

Мероприяти вăхăтĕнче общество пурнăçне тата хĕрарăмсен юхăмне активлă хутшăннăшăн Татьяна Сергеевна Ивановăпа Анжела Юрьевна Илларионована Тăвай муниципалитет округĕн пуçлăхĕн, Эльза Валерьевна Степановăпа Валентина Витальевна Обаськинана Чăваш Енри Хĕрарăмсен союзĕн тата Оксана Петровна Храмовăпа Ольга Алексеевна Архиповăна Чăваш Ен Пуçлăхĕн Тав хучĕсемпе чысланă.

**Раиса ШУМОВА**

ЯТАРЛĂ ÇАР ОПЕРАЦИЙĔ

## Студентсене – стипенди

**Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн йышăнăвĕпе ятарлă çар операцине хутшăнакансен ятарлă вăтам пĕлӳ паракан вĕренӳ заведенийĕсенче вĕренекен ачисене – ССУЗсен студенчĕсене – Чăваш Республикин Пуçлăхĕн стипендийĕпе тивĕçтерĕççĕ. Укçа хавхалантарăвĕ – 2500 тенкĕ.**

Стипендие тивĕçес тесен вĕренӳ организацине документсен пуххине тăратмалла. Студент 23 çула çитсен, вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайманран кăларса яма тивнĕ пулсан тата вĕренсе пĕтернĕ хыççăн ăна стипенди тӳлеме пăрахаççĕ. Академи отпускĕ илнĕ вăхăтра та студента стипенди тӳлеме чарăнаççĕ. Аса илтеретпĕр, Чăваш Енре СВО участникĕсемпе вĕсен çемйисем валли пулăшăвăн 50 тĕрлĕ мелĕ вăйра тăрать.

## Правительствăн Тав хучĕ

**Малашне республикăн Министрсен Кабинечĕн Тав хучĕпе те хавхалантарма тытăнĕç.**

Ăна республикăн социаллă пурнăçĕпе экономикине аталантарма хастар хутшăнакан, професси тивĕçĕсене пурнăçланă чухне тата общество ĕçĕнче тунă çитĕнӳсемшĕн уйрăм çынсемпе организацисен коллективĕсене парĕç. ЧР Министрсен Кабинечĕ Тав хучĕн положенине 2025 çулхи сентябрĕн 17-мĕшĕнче çирĕплетнĕ.

## 100 çул тултарнă май

**Тăвай муниципалитет округĕн архивĕнче нумай çул район ертӳçире – халăх депутачĕсен райсовет ĕçтăвкомĕн председателĕнче тăрăшнă Василий Архипович Козлов çуралнăранпа 100 çул тултарнине асăнма унпа пĕр вăхăтра ĕçленĕ ĕç ветеранĕсем пухăннă.**

Вĕсем Василий Архипович районăн социаллă пурнăçĕпе экономикине, инфраструктурине аталантарассипе нумай ĕç тунине палăртнă. Çавăнпа чылай орденпа медале, грамотăна тивĕçнĕ. Унăн ятне 1980 çулта районăн Ĕç Мухтавĕпе Хисеп кĕнекине те кĕртнĕ.

В.А.Козловпа пĕрле ĕçленĕ çулсене М.Я.Яковлев, А.А.Захаров, А.М.Алексеева, А.И.Иванов, Г.А.Масленников, Н.И.Павлова тата В.Я.Шакров аса илнĕ, вăл пултаруллă, тӳрĕ те çирĕп ыйтакан ертӳçĕ, çав вăхăтрах усă çын пулнине палăртнă.

ЭПИР ПĔРЛЕ!

## Тылрисен тĕрлĕ пулăшăвĕ

**Тăвайри ЦСОНа ятарлă çар операцийĕнчи ентешсене пулăшу сĕнекенсем килсех тăнине пĕлтерчĕ Наталья Федорова социаллă ĕçчен. Иртнĕ эрнере Тăвай ялĕнче пурăнакан Любовь Леонтьева 15 мăшăр ăшă нуски çыхса килсе панă.**



– Мĕн пултарнипе пулăшас тетĕп. Сурăх çăмĕнчен те, магазинри çипрен те тĕрлĕ виçеллĕ çыхатăп. Пĕлтĕр 25 мăшăр çыхса панăччĕ. Çапла пушă вăхăта ыр кăмăллăх ĕçне халаллатăп,– тет Любовь Петровна. Вăл Тăвай больницинче нумай çул завхозра тăрăшса тивĕçлĕ канăва тухнă.

Çавăн пекех салтаксем патне хальтерех Тăвайри Терентьевсемпе Павловсен çемйисенчен 10 мăшăр ăшă нуски, типĕтнĕ панулмипе груша ăсатнă. Хисеплĕ ĕç ветеранĕсене тав турĕ Наталья Юрьевна. Кĕрхи çанталăкпа килĕшӳллĕн çыхнă 24 хӳтĕлев сеткине СВО зонине Станислав Данилов волонтер урлă парса яние асăнчĕ.

**Раиса ШУМОВА**

## Осенний призыв

**С 1 октября 2025 года в России стартовал осенний призыв. Начались мероприятия призыва на срочную военную службу и в военном комиссариате города Канаш, Канашского и Янтиковского районов.**

Как и ранее, призыв будет осуществляться в установленные законодательством Российской Федерации сроки и в плановом порядке. Срок службы по призыву остается неизменным – один год и для участия в выполнении задач специальной военной операции военнослужащие, проходящие военную службу по призыву, направляться не будут.

Для прохождения военной службы по призыву наши ребята в зависимости от состояния здоровья, уровня физической подготовки, результатов профессионально-психологического отбора, полученного уровня образования, будут распределены в различные виды и рода войск. Большинство призывников будут направлены в учебные соединения и воинские части, где получат военно-учетную специальность, а после продолжат службу в соответствии с полученной военной подготовкой.

Армия – это школа мужества, которую должен пройти каждый молодой человек. Радует, что сегодня многие юноши это понимают, и служба Родине для них не в тягость, а почетный долг!

**Евгений СЕМЕНОВ, военный комиссар города Канаш, Канашского и Янтиковского районов Чувашской Республики, подполковник**

# Вĕсен ĕçĕ пархатарлă

**Юпа уйăхĕн 12-мĕшĕнче, йăлана кĕнĕ тăрăх, Раççейре ял хуçалăхĕпе тирпейлекен промышленноç ĕçченĕсен професси уявне паллă турĕç. Çавна май АПК ветеранĕсен округри организацийĕ те хăйĕн пайташĕсене çавра сĕтел хушшинчи тĕлпулăва йыхравларĕ.**



Аслă ăрăва, хăйсен пурнăçĕн ытларах пайне ял хуçалăхне аталантарас тивлетпе çыхăнтарса районшăн сахал мар ырă ĕç тунă çынсене нихăçан та тимлĕхсĕр хăвармалла мар пирĕн. АПК ветеранĕсен вырăнти уйрăмĕнче ытларахăшĕ – хăй вăхăтĕнче колхоз е совхоз ертӳçисенче нумай çул тăрăшнă çынсем. Çавăнпа пĕрлех ял хуçалăх сферине тивĕçтерекен предприятисен руководителĕсем те пур. Уявпа çыхăннă тĕлпулăва уçнă май, вырăнти организаци ертӳçи Н.И.Иванов пухăннисене çирĕп сывлăх, ăнăçу, вăрăм ĕмĕр сунчĕ. Вăл кĕскен çĕршывăн тĕп хулинче – Мускавра ĕçлекен «Ылтăн кĕркунне» курав, Чăваш Енрен унта хутшăнакан предприятисем, тăван округри çĕр ĕçченĕсен çитĕнĕвĕсем çинче чарăнса тăчĕ. Акă, пирĕн тăрăхра кăçал 35 пин тонна, е кашни гектартан 34 центнер тырă пухса кĕртнĕ. Вырăхсен продуктивлăхĕ те ӳссе пырать. Çакăн пирки тĕлпулура округ пуçлăхĕн çумĕ, администрацин экономика, çĕр тата пурлăх хутшăнăвĕсен пайĕн начальникĕ Е.А.Козлов та пĕлтерчĕ пухăннисене округ пуçлăхĕ О.А.Ломоносов ячĕпе саламланă май.

Яланхи йăлапа, АПК ветеранĕсен округри уйрăмĕн хисеплĕ председательне М.Я.Яковлева та сăмах пачĕç.

– Пирĕн организаци сахал мар ĕç туса ирттерет, ветерансем округ пурнăçĕнчен айккинче тăмаççĕ, хăйсен пуян опытне халĕ ĕçлекенсене пама тăрăшаççĕ,– терĕ ЧР ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Михаил Яковлевич. Асăну хăмисем уçас, астăвăм кунĕсем йĕркелес ĕçсене малалла тăсма кирлине палăртрĕ.

АПК ветеранĕсен хастарлăхне темиçе тĕслĕхпе çирĕплетес килет. Акă, нумай-нумай çул «Шимкусский» совхоза çӳллĕ шайра ертсе пынă Ю.А.Алексеев халĕ те стройра. Ывăлĕпе пĕрле йĕркеленĕ фермер хуçалăхне аталантарассишĕн ырми-канми тăрăшать. Нумаях пулмасть члена илнĕ В.В.Николаев пирки те ыррине çеç каламалла. Вăл ертсе пыракан фермер хуçалăхĕ округра малтисен шутĕнче, ял хуçалăх продукцине туса илессине çуллен хăпартса пырать, ентешсене ĕç вырăнĕсемпе тивĕçтерет.

Организацие ертсе пыракан Н.И.Иванов та ывăлĕпе пĕрле йĕркеленĕ производствăра халăха кирлĕ таварсем туса кăларать, çĕнĕлĕхсене ĕçе кĕртессипе тимлет. Г.А.Масленников (Вăтаяль), Н.Г.Ласточкин (Кармал) – ял старостисем. Пурăнакан вырăна ял халăхĕшĕн хăтлă та илемлĕ тăвассишĕн сахал мар вăй хураççĕ. Халăхпа пĕрле, пуçару бюджечĕн майĕсемпе тĕллевлĕ усă курса, кăçал та нумай ырă ĕç пурнăçлама май килнĕ асăннă ялсенче. В.Н.Николаев (Çĕнĕ Ишпуç) темиçе çул ĕнтĕ хăйĕн çемйипе ялти чиркӳ ĕçне йĕркелессипе тимлет. Е.А.Михайлова нумай çул округ администрацийĕнче вырăх-чĕрлĕх отраслĕшĕн яваплă специалист пулса тăрăшрĕ, халĕ, тивĕçлĕ канура пулин те, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин округри уйрăмĕн ĕçне хутшăнать. Ф.Г.Степанова (Çĕнçырма), Т.Г.Иванова (Ураскасси), Л.В.Якку (Сăхăтпуç) ял-йышпа пĕрле СВО воинĕсене пулăшу кӳрес пархатарлă ĕçе хутшăнаççĕ. Çапла, вăй çитнĕ таран, пурте общество пурнăçĕнче активлăх кăтартаççĕ.

Шăкăл-шăкăл калаçса ларнипе вăхăт иртни те сисĕнмерĕ тĕлпулура. Хăйсем ĕçленĕ çулсене аса илчĕç хисеплĕ ветерансем, паянхи кăткăс пулăмсене те сӳтсе яврĕç. В.В.Петухов, В.В.Федоров (Тăрмăш) аса илсе каласа пани кăсăклă пулĕ ыттисемшĕн те. Сакăрвуннăмĕш çулсенче вĕсем тăрăшнă Ленин ячĕпе хисепленекен колхоз районта малтисен шутĕнче пулнă, вăйлă хуçалăх шутланнă. Çулталăкри вăтам кăтартăва илес пулсан, колхоз ĕçĕнче 650 çын вăй хунă, тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра ĕçлекенсен йышĕ 800ре те çитнĕ. Колхозра 12 бригада шутланнă. Тракторсем уй-хирте темиçе сменăпа ĕçленĕ, топливăпа илсе пырса тивĕçтернĕ. Пĕр тракторпа, сменăсене ылмаштарса, тăватă механизатор таран тăрăшнă. Çакăн пек йышлă коллективсене ăнăçлă ертсе пынă пирĕн ертӳçĕсем – халĕ АПК ветеранĕсен Союзĕн членĕсем. Чыс та мухтав вĕсене!

**Людмила ПАВЛОВА**

СПОРТ

# Республикăра палăрнă

**Чутейре пурăнакан Геннадийпе Лидия Шамбулинсем виçĕ ача пăхса çитĕнтернĕ. Асли Иван нумай çул Дагестанра службăра тăнă. Халĕ Мелитопольте росгвардинче майор званипе Тăван çĕршыв лăпкăлăхне сыхлать. Хĕрĕ Ангелина – врач-терапевт, Норильск хулинче пурăнать. Иккĕшĕ те çемьеллĕ. Кĕçĕнни Владислав Чутейри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта 11 класра вĕренет. Малалла сăмахăм ун çинчен пулĕ.**




Владислав шкулта лайăх енчен палăрса тăрать. Тĕрлĕ пысăк мероприятисенче час-часах ертӳçĕ ролĕнче вăл. Спортпа та питĕ туслă: футболпа волейбол вăййисене кăмăллать, Тăвайри «Аль» физкультурăпа спорт шкулне самбо секцине çӳрет. Çак кунсенче Шупашкарти «Экра» ПКС ЧУ спорт залĕнче арçынсен хушшинче самбо енĕпе Чăваш Республикин Кубокне çĕнсе илессишĕн пынă ăмăртăва Иван Макарычев юлташĕпе хутшăннă. Вĕсем Андрей Павлов тренер-преподаватель воспитанникĕсем. Владислав Шамбулин **(сăн ӳкерчĕкре варринче)** 58 килограмлă виçе категорийĕнче 3-мĕш вырăн йышăннă.

Пысăк çитĕнӳпе саламлатпăр Владислава! Малалла та ăнăçу сунатпăр.

**Зинаида ИВАНОВА, Чутей ялĕ**

# Хĕле хатĕрлет

**Çырла туса илесси тата унран хатĕрленĕ продукци калăпăшĕ çулсерен ӳссе пыни çинчен каланăччĕ Чăваш Ен Пуçлăхĕ Олег Николаев республикăра кăçалхипе виççĕмĕш хут иртнĕ Çырла фестивалĕнче. Çакă вăл пирĕн Тăвай округĕн тĕслĕхĕнче те палăрать.**

Тăрмăшра та, Улянкăра та çине тăрса тата хавхаланса ĕçлеççĕ çырла туса илессипе. Улянкăри Владислав Витальевич Кузьмин ку енĕпе ятарлă фермер шкулĕнче вĕренсе те пĕлĕвне ӳстернĕ. Кăçал вăл тăватă гектар çинчен 25 тонна ытла çырла пуçтарса илнĕ. Çу каçа, мĕн кĕркуннечченех татса пухнă пылак çырлана. Çак ĕçе çынсене те явăçтарнă укçа тӳлесе. Çырла сутăнсах пынă – ытларах хуласене курттăммăн илсе кайса тăнă паха çимĕçе.

Çитес çулта та тухăçлă çитĕнтерме ĕмĕтленет çырла ăсти. Çавăнпа хальхи вăхăтра çырла тĕмĕсене, йăрансене хĕле хатĕрлеме, вĕсене ăнăçлă хĕл каçарма тимлет. 2019 çултанпа çырла туса илекенскерĕн тата ку енĕпе ятарласа вĕреннĕскерĕн сахал мар пĕлӳпе опыт пухăннă.

**Иван ИВАНОВ**

ÇЕМЬЕ НАЦИОНАЛЬНЫЕ ПРОЕКТЫ РОССИИ

# Финанс пĕлӳлĕхĕн çемье фестивалĕнче




Кучеровсен çемйи

**Иртнĕ шăматкун Тăвайра «Çемье» наци проекчĕн картинче пĕлтерĕшлĕ мероприяти – финанс пĕлӳлĕхĕн Республикăри çемье фестивалĕ иртнĕ. Халăхăн финанс пĕлӳлĕхне ӳстермелли стратегипе килĕшӳллĕн йĕркеленĕ мероприятие 100 ытла çын хутшăннă тата вăл финанс пĕлĕвĕ урлă çемье хаклăхĕсене çирĕплетмелли пĕлтерĕшлĕ утăм пулса тăнă.**

Фестивале Тăвай муниципалитет округĕн пуçлăхĕ Олег Ломоносов тата Чăваш Республикин Наци банкĕн уйрăмĕн управляющийĕ Максим Фролов хутшăннă. Вĕсем хăйсен сăмахĕнче финанс пĕлӳлĕхĕ çемье институтне çирĕплетес тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăннине палăртнă.

Фестивале хутшăннисем çав кун пуçĕпех финанс пĕлӳлĕхĕн илĕртӳллĕ тĕнчине путнă. Вунă вĕренӳ станцийĕ хăнасене «Çемье» наци проекчĕн тĕллевĕсене тивĕçтерекен тĕрлĕ формат сĕннĕ: специалистсен ултавçăсенчен хӳтĕленмелли тата çемьесене патшалăх пулăшăвĕ памалли программăсемпе усă курмалли практикăлла консультацисем, ачасене финанс яваплăхне вĕрентекен интерактивлă вăййăсемпе мастер-класcем, çемье бюджечĕ çинчен пĕлмелли материалсен финанс кинотеатрĕ, çемье çыхăнăвĕсене çирĕплетме май паракан пултарулăх конкурсĕсемпе викторинăсем, ĕçлесе илнĕ укçапа пурнăçра усă курма вĕренесси, финанс культурине ӳстересси.

«Фестиваль çемьене вăйă формипе бюджета тытса пыма тата укçа-тенкĕне ултавçăсенчен хӳтĕлеме вĕрентекен лайăх тĕслĕх пулса тăчĕ. Мероприяти унта хутшăннисен финанс пĕлӳлĕхĕн шайне ӳстерчĕ кăна мар, çемьесен хаклăхĕпе йăли-йĕркисене çирĕплетме те пулăшрĕ»,– палăртнă Тăвай муниципалитет округĕн пуçлăхĕ Олег Ломоносов.

Тăвайри Кучеровсен çемйи фестивальти конкурс вăхăтĕнче чи нумай балл ĕçлесе илнĕ, тĕп приза – велосипеда тивĕçнĕ.

Мероприятие йĕркеленисем Чăваш Енĕн Наци библиотекипе Чăваш Республикин культура, архив ĕçĕпе национальноçсен ĕçĕсен Министерстви тата финанс Министерстви те мероприяти пысăк эффективлăхпа иртнине тата ăна çуллен ирттерме планланине палăртнă.

**ХАМĂР ИНФ.**



# Манăн ял – манăн тăван кил



Проект Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пурнăçа кĕрсе пырать

# Староста ĕçне ял халăхĕ хаклать

**Енĕшнăрвашсем пуçарулăх проекчĕпе нумай ĕç пурнăçланă. Ял сăн-сăпачĕ улшăннине кирек кам та асăрхать. Тăван кĕтесе хăтлăрах те илемлĕрех тăвассинче ял старостине Надежда Петровна Чернована та палăртмасăр ниепле те иртме çук.**

**– Мĕнле пурăнатăн, мĕнле сывлатăн? – тесе ыйтсан: – Ял пурнăçĕпе, ялăн çав тери таса сывлăшĕпе савăнса пурăнатăп,– терĕ вăл.**

**Енĕш Нăрваш – округри чи пысăк ялсенчен пĕри. Яла пырса кĕнĕ çĕртенех курăнать унăн хăтлăхĕпе пултаруллă та паллă çынсемпе пуянни. Чечек клумбисем ешереççĕ, сумлă ентешсен портречĕсем ял урамне илемлетеççĕ.**



2022 çулта ял халăхĕ пĕр шухăшлăн староста тивĕçне шаннă ăна. Тепĕр çулнех «Чăваш Енри чи лайăх ял старости» конкурсра иккĕмĕш вырăна тивĕçнĕ. Мĕнрен пуçăннă-ха ĕçе? Чи малтанах ял çыннисем ыйтнипе масара тирпейлесе тăрассине хăйĕн тивĕçĕ вырăнне хунă. Акă, виле пытармалла. Хĕлле çула юр хӳсе каять, кĕрсе ăшăнма пӳрчĕ кивелнĕ. Ял-йышпа тăрăшса кăçал пуçару бюджечĕпе çĕнĕ çурт тунă, маларах çулне лайăхлатнă. Сивĕсенче хутса ăшăнмалли кăмакине Надежда Петровна хăех шуратса тирпейленĕ. Масар алăкне юсаса çĕнетме, сăрлама çемйипе хутшăннă. Кунта татах тирпейлемелли нумай-ха.

Енĕш Нăрвашра кăçал пуçару бюджечĕн мелĕпе 8 проект пурнăçланă: Чапаев, Канашская, Комаров, Западная, Чувашская урамĕсенчи çул-йĕре вак чул сарса хытарнă, шыв юххи тунă, кĕпере юсаса тирпейленĕ. Тунă ĕçсен шутĕнче – культура çуртĕнче тĕнчипе паллă, çак ялтан тухнă СССР халăх артисткин Вера Кузьминан кĕтесне йĕркелени те. Кунта Вера Кузьминичнан пурнăçне, театр пултарулăхне сăнлакан афишăсем, сцена тумĕсем, сăн ӳкерчĕкĕсем, наградисем, тĕрлĕ япалисем тата ытти те. «Хамăр ентешĕн ятне ĕмĕр манăçми тăваççĕ вĕсем. Малашне кунта В.К.Кузьмина ячĕллĕ театр каçĕсем, конкурссемпе фестивальсем иртĕç. Вĕсем татах та нăрвашсен сумне çĕклĕç»,– тет çак ĕçе йĕркелекенсенчен пĕри, ялти халăх театрĕн режиссерĕ, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Зоя Васильева.



Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Олег Николаев округри ĕçлĕ çулçӳрев вăхăтĕнче кăçалхи август уйăхĕнче музей экспозицине уçма хутшăннă. Енĕшнăрвашсен пуçару проекчĕпе пурнăçланă ĕçĕсене пысăк хак панă. Вăл «Ниме – Халăх бюджечĕ» программа çĕнĕ ĕмĕт-тĕллевсем çуратнине, ырă улшăнусем тăвас тĕллев халăха пĕр чăмăра пĕрлештернине палăртнă, нăрвашсене ятарлă çар операцийĕнчи салтаксене пулăшнăшăн мухтанă.

«Республика Пуçлăхĕпе юнашар тăрса куçа-куçăн калаçрăмăр. Ял çыннисем ячĕпе патшалăх паракан пулăшушăн тав турăм. Çак программа чăннипех те хăтлă пурнăçăн никĕсĕ пулнине халăх ăнланса, палăртнă ĕçшĕн вăя хурса ĕçленине çирĕплетрĕм калаçу вăхăтĕнче»,– терĕ ял старости.

Çитес çулта Тăвай округĕнче 108 проект пурнăçа кĕртме планланă. «Ниме – Халăх бюджечĕ» программăна хутшăнакан проектсемшĕн сасăлав сентябрĕн 26-мĕшĕнче вĕçленнĕ. Вĕсене часах конкурс майĕпе суйласа илеççĕ.

– Эсир мĕнле пуçарусемпе тухрăр,– кăсăкланатăп Надежда Петровнаран.

– Пурĕ 9 заявка тăратрăмăр. Çул ыйтăвĕ яланхиллех пĕлтерĕшлисен шутĕнче. Пуçару бюджечĕн проекчĕпе ялти 32 урамри чылай çула юсанă. Малашлăхри планра – Максимов, Мирная, Речная, Калинин урамĕсенчи çулсене çĕнетесси, ялти тĕп çула юсасси; Енĕш Нăрваш шкулĕнчи канализаци тытăмне йĕркене кĕртесси; шкул автобусĕ валли гараж тăвассин иккĕмĕш тапхăрти ĕçсене вĕçлесси. Çавăн пекех çăва çинче тирпей-илем кĕртмелли, çăлкуç патĕнчи çула юсамалли ĕçсене те кĕртрĕмĕр.

«Пирĕн староста лара-тăма пĕлмест. Ял вăранса çитеймен-ха, Надежда вара, икĕ урапаллă транспорчĕ çине ларнăскер, ирхи шăплăха хускатса таçтаваскать. Килти хуçалăхĕ те пысăк, картиш тулли выльăх-чĕрлĕх, пахчи çимĕçрен тулăх. Ăçтан ĕлкĕрет-ши?»– тенĕччĕ ун пирки педагогика ĕçĕн ветеранĕ Зинаида Петровна.

– Чăнах та велосипедпа çӳреме юрататăп. Сывлăхшăн та усăллă. Унпа ял йĕри-тавра кунне виççĕ çаврăнма та ĕлкĕретĕн. Капла тата мĕнле ĕçсем тумаллине те асăрхатăн, ертӳçĕсемпе канашлатăн,– хушса хучĕ сывă пурнăç йĕркине мала хуракан ял старости. Харпăр хăй хапхи умĕнче тирпейсĕрлĕхе курсан, асăрхаттарса хăварма та ӳркенмест вăл.

Н.Чернова старостăра ĕçлеме пуçланăранпа ял çĕнелсе, тирпейленсе пыни куçкĕрет. Староста каланине итлеççĕ. Хисеплеççĕ ăна. Вăл чăннипех те ял халăхĕ шанса панă тивĕçĕпе хăйĕн вырăнĕнче пулни курăнать.

Юлашки çулсенче ял тăрăхĕн пуçлăхĕсем улшăнса тăчĕç. Кунта вара ялти общество организацийĕсем – ветерансен, хĕрарăмсен, инвалидсен совечĕсем (председателĕсем Зоя Герасимова, Светлана Михайлова, Галина Сергеева) канăç паман ыйтусене пĕрле сӳтсе явма тăрăшнине палăртмалла.

Ял çыннисен, çав шутра çамрăксен, вăхăтне усăллă, интереслĕ иртерес ĕçре культура ĕçченĕсемпе, ял хастарĕсемпе пĕрле тăрăшать Надежда Петровна. Яланах мĕн те пулин çĕнни шухăшласа кăларать. Регион Пуçлăхĕн «Чăваш Енри хаваслă çу кунĕсем» проектне пурнăçласа çемье, юратупа шанчăклăх кунĕнче урам уявне йĕркеленĕ. Ашшĕ-амăшĕнчен ачипăчи те юлман. Çĕнтерӳçĕсене пĕчĕк открыткăсем пани те савăнăç кӳнĕ пухăннисене. Уявра чăваш тумĕ тăхăннă Надежда Петровнапа мăшăрне Григорий Сергеевича çемье çавăрнăранпа 45 çул çитнипе саламланă Чапаев урамĕнче пурăнакансем, салтак тӳми чечекĕн çыххине парнеленĕ. Çак праçник малашне йăлана кĕрес шанăçпа килĕсене саланнă. Çапла пĕтĕçтереççĕ уявсем, чун-чĕрене ăшăтаççĕ, ырă йăлана куçаççĕ, чăвашлăх эткерлĕхне упраса малалла аталантараççĕ.

Чăваш Енри Хĕрарăмсен союзĕ йĕркелекен «Эпĕ – хĕрарăм» конкурса кăçалхипе тăваттăмĕш хут хутшăннă вăл. «Çĕнтерме май килмесен те ыттисен ĕçĕ-хĕлĕпе паллашни, ăсталăха ӳстерни те паха»,– терĕ чунне уçса маттур хĕрарăм.

Волонтерсен юхăмĕ вăй илсе пырать Нăрваш тăрăхĕнче. Культура çурчĕ умĕнче ятарласа Волонтерсен аллейине уçнă кăçал. Хунавсем, клумбăсене чечексем лартса хăварнă. Районти «Ял ĕçченĕ» хаçат тусĕ пулнă май, вулакансене пĕлтерме те вăхăт тупрĕ ырă хыпара. Ял старостин пĕтĕм ĕçĕ социаллă сетьри «Ял хыпарĕ» ушкăнра курăнса тăрать. Ял халăхĕпе канашласа пурнăçламалли ĕçсем те вырнаçтараççĕ унта.

Светлана Михайлова ертсе пынипе кĕмĕл волонтерсем СВОри хӳтĕлевçĕсене пулăшса маскировка тетелĕ çыхассине, гуманитари пулăшăвĕ





пухассине йĕркеленĕ. Кирлĕ пулăшăва хамăр салтаксем патне çитерекен Сергей Иванова, спонсорла пулăшу паракан Роман Егорова, Александр Герасимова тата çамрăк волонтерсене тав тăвать ял халăхĕ. Çакăн çинчен социаллă сетьри «Вучах» ушкăн пĕлтерет. Нăрвашсен ячĕпе çар чаçĕн командованинчен Тав çырăвĕсем темиçе те килнĕ. Пĕр шухăшлă пулса çĕнтерĕве çывхартас çирĕп шанăçпа пухăнаççĕ волонтерсем клуба. Надежда Чернова хăй те ыр кăмăллăх ĕçĕнче ыттисемшĕн тĕслĕх.

Ыр кăмăллăх, пулăшу ĕçĕ пирки сăмаха тăсса, ял старостин тепĕр сăваплă ĕçне те асăнса хăварни вырăнлă. «Жди меня» телекăларăмăн шаннă тусĕ те вăл. Чăвашран çухалнă çынсене архивсем урлă, вĕсен тăванĕсемпе çыхăнса тупма пулăшать.

«Сахал мар çынна шыраса тупма пулăшса савăнăç кӳтĕм. Вĕсен чĕререн тухакан тав сăмахĕсем шырав ĕçне малалла тăсма хистеççĕ. Ĕнер те, акă, çĕрĕпех лартăм шырав ĕçĕпе, çурçĕр те иртсе кайрĕ»,– терĕ вăл.

«Вăл пирĕн пысăк стажлă староста»,– тенипе епле килĕшмесĕр тăрăн тата. Çак тивĕç ун çумне шкултах çыпăçнă. Ун чухне класри староста пулма суйланă харсăр хĕрачана. Улатăрти ял хуçалăх тата Бугульмари суту-илӳ техникумĕсенче те чи пултаруллă старостăсен йышĕнче пулнă. Халĕ акă Чăваш Енре те лайăх пĕлеççĕ Тăвай енĕн хастарне.

Пĕлтĕр пысăк йышпа «СИКТЕ» çырмине нимелле тирпей-илем кĕртнĕ, ял чиркĕвĕн пачăшки Георгий атте шыва сăваплană. Халăх нумай пухăннă ун чухне уява. Çакăн хыççăн пуçаруллă та ĕçчен Нăрваш халăхĕн ырă ĕçĕсемпе Чăваш радиовĕпе «Ялтан яла» передачăра паллашнă республика çыннисем. Паллах, нумай пуçару ĕçĕнче ял старостин тӳпине палăртаççĕ ялта пурăнакансем.

– Мĕнре-ха ĕçри ăнăçусен çăлкуçĕ?

– Чи малтанах мăшăр яланах çумра пулни, ăнланни пулĕ, тетĕп. Аллисем ылтăн унăн, пур ĕçе те пултарать, пĕр ĕçрен те юлмасть. Килĕштерсе пурăнатпăр,– тет кил хуçи хĕрарăмĕ.

Н.П.Чернова кун-çулне суту-илӳпе çыхăнтарнă, ĕç ветеранĕ. 40 çул ялти лавккара сутуçăра вăй хунă, нумай хисеп хутне тивĕçнĕ. Григорий Сергеевич «УК «Янтиковская» обществăра водитель-механикре тăрăшать. Ăста специалист пулнине палăртаççĕ ĕçтешĕсем. Тутарстанри Апастово районĕнчи Кӳльпуçĕ чăваш ялĕнчен вăл. Ял хуçалăх институчĕ пĕтернĕ. 3 ача çуратса ӳстернĕ, 9 мăнукĕпе савăнаççĕ Черновсем. Ачисем çемйисемпе тăтăшах пуçтарăнаççĕ тăван килте. Çирĕп хуçалăхра вара кашнин валлиех ĕç çителĕклĕ. Пĕрле канма та кăмăллă. Унсăр пуçне ял малашлăхĕшĕн те хăйсен тӳпине хываççĕ.

Пĕр-пĕрне ăнланса, пĕр шухăшлă пулни тăван кĕтесе малалла хăтлăрах тума хавхалантарать нăрвашсене. Пурăнать, аталанать тăван ен, капăр çуртсемпе илемленет, çамрăксене ялта пурăнма йыхăрать.

**Раиса ШУМОВА**

НАЦИ ПРОЕКЧĔ

# Туризм маршручĕпе

**Республикăра пурăнакан кашни çын тата хăна чăваш халăхĕн пуян культурипе паллашма пултартăр тесе тăрăшаççĕ. Тăвай округĕнчи аслă ăру çыннисем, кĕмĕл волонтерсем, çу кунĕсенче таçта та çитсе курса, çĕршыври паллă вырăнсемпе паллашрĕç, мухтавлă ентешсемпе курнăçрĕç.**

Çакă ветерансен пушă вăхăтне усăллă ирттерме, ĕмĕрне тăсма пулăшать. Ытти çулсенче те ятарласа хатĕрленĕ туризм маршручĕпе Муркашри чăваш юманĕ патĕнче, Йошкар-Олара, Хусанта, республикăн тĕрлĕ вырăнĕсене çитсе курнă эпир.

Иртнĕ эрнере Тăвайри «Активлă вăрăм ĕмĕр» центр волонтерĕсем Чăваш Енĕн тава тивĕçлĕ артисчĕн Василий Раймовăн юбилей концертĕнче пулнă. Ăна юрă ăстин сцена çинчи пултарулăхĕн 50 çулне халалласа ирттернĕ. Пурте кăмăллă юлтăмăр. Чăваш Патшалăх юрăпа ташă ансамблĕн директорне Л.Антонова, республикăри ветерансен Канашĕн председательне Г.Васильева тав турăмăр. Концерт умĕн хула илемĕпе килентĕмĕр. Ытти çĕртен килнĕ туристсемпе те калаçма май килчĕ. Пурте пирĕн Шупашкар хулипе кăмăллă иккен.

**Римма ГУРИНА,**
**ĕçпе вăрçă ветеранĕсен председателĕ**



ВĔРЕНТӲПЕ ВОСПИТАНИ

# Ашшĕ-амăшĕн тивлечĕ ачашăн ырă тĕслĕх пулмалла

**Тăван кил – эпир çут тĕнчене килекен сăвапла вырăн. Кунтах эпир пĕрремĕш утăм тăватпăр, малтанхи сăмах калатпăр, атте-анне ăшшине туйса çитĕнетпĕр. Пирĕнпе пĕрле тĕнче те ӳссе сарăлсах пырать: малтанлăха вăл – пӳрт ăш-чикки те кил хушши, каярахпа тăван урам, çывăхри улăх-çаран, уй-хир, вăрман. Тăван кĕтес вара пирĕншĕн тĕнчери хитре вырăнсенчен те илемлĕрех, пуян çĕрсенчен те тулăхрах. Хĕвелĕ те ăшăрах кунта, çилĕ те çепĕçрех тата ачашрах. Тăван кил ăшши... Çемьери ырă йăла-йĕрке пирки сăмах пуçласан эпĕ ваттисен сăмахне аса илетĕп: «Килĕшӳ – кил илемĕ». Чăнах та, паянхи пурнăçра çак сăмах питĕ пĕлтерĕшлĕ тесе калама пулать.**

Çемье – тăнăçлăх вучахĕ тетпĕр. Çут тĕнчене килнĕ çамрăк чунăн çывăх çынсен хӳттинче, ăшшинче хăй ыттисене кирлине туйса-курса, унăн ырă йăли-йĕркине ăша хывса çитĕнмелле, паллах. Ача пурнăçра мĕнле çул çине тухасси тăван кил ăшшинчен, çемьери хутшăнусенчен нумай килет. Ачана чи малтанах хитре тумлантариччен, тутлă çитериччен унпа пĕр чĕлхе тупма пĕлмелле, ĕçе явăçтармалла. Ĕç нихăçан та ачана пăсмасть. «Ĕç упăтерен те çын тунă»,– тенĕ халăхра. Ку питĕ тĕрĕс тесе шутлатăп.

Атте-анне! Мĕн тери çепĕççĕн, илтĕнеççĕ çак сăмахсем. Вĕсене эпир уйăхпа, хĕвелпе тан хуратпăр. Атте-анне хӳтлĕхĕнче пурăннă чухне нимĕнле хуйха-суйха пĕлместпĕр. Анчах та ӳссе çитĕнсен вĕсен кайăк чĕпписем пек кам ăçта вĕççе саланать. Таçта аякра пулсан та атте-аннене, кил-çурт ăшшине асра тытасчĕ. Аттепе анне лайăх тунă ĕçшĕн савăнаççĕ, начарришĕн хурланаççĕ, çавăнпа та пирĕн вĕсене пĕтĕм чун-чĕререн упрасчĕ.

Ачана ашшĕ-амăшĕнех пăхса ӳстермелле. Унсăрăн унран чăнчăн телейлĕ çын пулас çук, тăван кил ăшшине нихăçан та туймĕ. «Вĕрентсе ăс-тăн парсассăн ятсăр çын та ятлăрах, аттепе анне пулсассăн вăйсăр çын та вăйлăрах»,– тенĕ пĕр юрăра. Шел пулин те, ашшĕ-амăшне ĕмĕр кӳренсе пурăнмалла суран тăвакан çынсем те çук мар-ха пирĕн хушăра. Хальхи вăхăтра ашшĕ-амăшне хăйсем пăхас вырăнне ваттисен çуртне кайса яракансем, вĕсен укçи-тенкине туртса илсе, хĕнесе-çапса пĕтерекенсем те пур. Çыннăн этем шайĕнчен тухмалла мар ĕнтĕ, таса тивĕçе туйсах тăмалла.

«Çын пуласси ачаран, лаша пуласси тихаран паллă»,– теççĕ халăхра. Çавăнпа та ачана пăхса ӳстерме ăс та, ăсталăх та, чун ăшши те кирлĕ. Çакă виçĕ ăнлав ачасене тĕрĕс пăхса çитĕнтерме пулăшать. Шел пулин те, хăшĕ-пĕрисем çакна шута илмеççĕ. «Ачана ашшĕ-амăшĕ пăсать»,– тенĕ ваттисем. Мĕншĕн ун пек каланă-ха?

Ман шутпа, кашни çемьере ашшĕ-амăшĕ ачи-пăчине сапăрлăх парасси çине тĕплĕ пăхать. Пĕрисем ачисене çирĕп алăра тытаççĕ: ĕçе хăнăхтараççĕ, сывлăха упрама (спортпа туслă пулма) вĕрентеççĕ, кăмăл-сипетне аталантараççĕ. Ывăл-хĕрне кусран вĕçертмеççĕ, вĕсен кашни утăмне пăхса тăраççĕ, шухăш-кăмăлĕпе кăсăкланаççĕ. Теприсем илемлĕ те чи хаклă çи-пуç, тутлă апат-çимĕç, компьютер та кĕсье телефонĕ парнеленипе, кĕсье тулли укçа тыттарнипе тĕрĕс сапăрлăх паратпăр тесе шутлаççĕ. Виççĕмĕшĕсем ачи хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕ çинчен суйса-каласа панипех çырлахаççĕ. Тăваттăмĕшсем кăмăлтан калаçас вырăнне ятлани-вăрçнипех ирттерсе яраççĕ. Пиллĕкмĕшсем, ĕçкĕ-çикĕпе иртĕхекенсем, ывăл-хĕрĕн шăпи çинчен шухăшласа пуçĕсене те ыраттармаççĕ. Улттăмĕшсем, ашшĕ-амăшĕн прависĕр юлнăскерсем, ачи-пăчин, телейсĕр кун-çулĕ çинчен, тен, шухăшлама та пăрахнă. Кашни çынна кăмăл ăшши кирлĕ-çке. Ашшĕ-амăшĕн ачисене ялан çакăн пек сăмахсем каласан пăсăк пулмасть: «Çын хушшинче çын пек пул. Никама та усал ан ту. Чипер çӳре. Хăвна йĕркеллĕ тыт. Аçу-аннӳ ятне ан яр. Ырă пул. Çыннăнне ан тĕкĕн, ху ĕçлесе тупнă пурлăх – укçаран та хаклăрах. Ваттисене хисепле». Атте-анне пилне асра тытса Тăван çĕршыва, халăхăмăра тивĕçлĕ çын пулатăн вара.

Атте – çемье тĕрекĕ, кил патши тетпĕр. Тĕрексĕр кирек мĕнле юпа та чăлăшать, тĕрексĕр кирек кам та хăйне мĕскĕн те телейсĕр туять. Кашни çемьере арçыннăн хăватлă сасси, çирĕп вăй-халĕ, хастар чун-чĕри, ăш пиллĕ сăмахĕ кирлех, унсăрăн чун та, пурнăç та пушăрах.

Анне – çемье ăшши, кил турри тетпĕр. Атте-анне яланах шăкăлтатса калаçаççĕ пулсан ача чунтан савăнать, хĕпĕртет. Пурнăçра вĕсенчен ыррине илме, вĕсем пек хастар пулма тăрăшать. Каларăшри пек, ырă тĕслĕх çĕр сăмахран лайăхрах. Çемье туслă пулсан кăна пирĕн пурнăç илемлĕ.

Чăваш культуринче çичĕ пил ăнлав пур. Çын çак çичĕ пилпе килĕшӳллĕ пурăнать пулсан ăна чăн-чăн çын тесе шутланă. Чăвашсем пĕчĕк ачасене çапла вĕрентсе каланă: «Сахал пупле, нумай итле, юлхав ан пул, çынран ан кул, шӳт сăмахне çĕкле, пуçна каçăртса ан çӳре».

Ман шутпа, ача ăслă пултăр тесен аттепе аннен авторитетлă пулмалла. Çемьере йĕркеллĕ ача-пăча ӳстерме амăшĕн ырă кăмăллăхĕ, ашшĕн çирĕплĕхĕ кирлĕ теççĕ. Çак икĕ ен ачаран чăн-чăн çын тăвать. Урăхла каласан, атте-аннен ырă тĕслĕхĕ ача çине куçмалла. Ашшĕ-амăшĕн мĕн пĕчĕкрен çирĕплĕхе, перекетлĕхе, тирпейлĕхе вĕрентмелле. Ăслă-тăнлă çын пултăр тесе пĕтĕм вăй-халне памалла. Аттепе анне хăйсен пурнăç курăмĕн ăслайĕпе пире тĕрĕс хурав шыраса тупма пулăшаççĕ.

Ашшĕ-амăшĕн пехилĕнчен тухакан çыннăн пархатарĕ çук тесе ахальтен каламан. Çавăнпа та ачан ашшĕ-амăшĕн сăмахне куллен ăша илме тăрăшмалла.

Кашни çыннăн тăван кил хӳтлĕх пулмалла, урăхла каласан, çемьере яланах ăнланупа килĕшӳ, ыркăмăллăх хуçаланмалла. «Ачасен шăпи – аслисен аллинче»,– теççĕ. Апла тăк, аслисен, ашшĕ-амăшĕн, ачисене пăхса ӳстерес ĕçре темиçе хут ăслăрах пулмалла. Вара тин аттепе аннерен ырă тĕслĕх илсе çын пулатăн.

Аттепе анне кил ăшшине тытса тăракансем. Эпир пурăнакан килте яланах ăшă пултăр тесен мĕн тумалла?

Кил ăшшине упраса хăвармашкăн пире пĕр япала çеç пулăшма пултарать – пĕр-пĕрне ăнланни.

Ман шухăшăмпа, Г.Н.Волковăн хайлавĕсем те çирĕплетеççĕ. Г.Н.Волков çырнă «Çемьери çил-тăвăл» калавпа паллаштарасшăн. «Çанталăк сивĕ тăнă. Куç уçма çук çил-тăман вĕçтернĕ. Çав вăхăтрах çамрăк çын урампа иртсе пынă май пĕрене çинче старик ларнине курах кайнă. Старик темĕн çинчен шухăшланă пулнă.

Çамрăк çын старик патне пырса:

– Мучи, мĕн туса ларан урамра çак çил-тăман вăхăтĕнче? – тесе ыйтнă.

–Эй, ачам,– тенĕ ăна ват çын, эсĕ пурнăçа чухласа илейместĕн-ха. Тулти çил-тăвăл мĕн вăл? Пӳртре ав ывăлăмпа кинĕм харкашаççĕ, ниçтан чарма çук: ку чăнласах та хăрушă çил-тăвăл. Яланах асту, ачам: тулти çил-тăвăл килтинчен лăпкăрах. Кил-йышра харкашу тухсан çуртран тухса тарас килет».

Çапла пуль. Ахальтен мар-çке ĕлĕкех ваттисем: «Кил-йышпа пĕрле пулсан çеç ăш-чик лăпкă пулать»,– тесе каланă. Чăнах, кил-йышра тату пурăннине нимĕн те çитмест.

Хамăн шухăша И.Я.Яковлевăн сăмахĕсемпе вĕçлес килет: «Çемйĕре лайăх пăхса усрăр: çемье вăл халăх чаракĕ, патшалăх чаракĕ. Çемье пурнăçĕ тĕлĕшпе ваттисем каланă сăмаха чăваш халăхĕ ялан та хытă тытса пынă. Çак пурлăха лайăх сыхласа пурăнăр. Çемьен лăпкă пурнăçĕ пире пурнăç хыттинчен хӳтĕлесе тăрать. Килĕштерсе тăракан тĕреклĕ çемьешĕн катаран килекен пурнăç синкерĕсем хăрушă мар...»– тенĕ И.Я.Яковлев.

**Эльвира КИРИЛЛОВА,**
**чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен,**
**Çĕнĕ Пуянкасси шкулĕ**

# Хастар хĕрарăм

**Елизавета Ивановна Касмыкова (Чернова) 1939 çулта августăн 7-мĕшĕнче çуралнă. Мĕн ачаран ăна пĕлетĕп. Вăл аса илсе каласа панисене тимлĕн итлетĕп. Тĕлĕнмелле шăпаллăскер! Ашшĕ Иван Семенович Чернов (1910–1941), вăтăртан иртсенех Аслă тĕнче вăрçинчи çапăçу хирĕнче пуçне хунă. Унăн вилтăприне шырав ушкăнĕ кайран, вуншар çул иртсен тин тупнă. Ăна Мускав çывăхĕнчи Волоколамск шоссе çумĕнчи Михайловка ялĕнче пытарнă. Черновсен çемйинчен пурĕ тăваттăн вăрçăра вилнĕ.**



